Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

69 (7494) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи августăн (çурла) 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Вырма – 2007

# ВЫРМАРА МАЛТИСЕМ

### ХУÇАЛĂХСЕНЧИ КОМБАЙНЕРСЕМ АВГУСТĂН 14–20-МĔШĔСЕНЧЕ ĔÇЛЕНИН ИТОГĔСЕНЕ ПĔТĔМЛЕТЕС

**“Дон-1500” комбайнсен класĕнче мала тухнă тесе йышăнас:**

1 вырăнта – “Герой” хуçалăхри Валерий Васильевич Ердуков комбайнер экипажĕ, 202 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 300 тенкĕ парса хавхалантарас.

2 вырăнта – “Свобода” хуçалăхри Александр Григорьевич Сергеев комбайнер экипажĕ, 171 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 200 тенкĕ парса хавхалантарас.

2 вырăнта – Суворов ячĕллĕ хуçалăхри Николай Витальевич Павлов, 171 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 200 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – “Оринино” хуçалăхри Олег Геннадьевич Федотов, 138 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – “Свобода” хуçалăхри Валерий Александрович Соловьев, 138 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**“Енисей – 1200” комбайнсен класĕнче мала тухнă тесе йышăнас:**

1 вырăнта – “Оринино” хуçалăхри Вячеслав Осипович Медов комбайнер экипажĕ, 170 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 300 тенкĕ парса хавхалантарас.

2 вырăнта – Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăхри Валерий Никодимович Осипов, 102 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 200 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – Ильич ячĕллĕ хуçалăхри Владислав Иосифович Аврамов комбайнер экипажĕ, 79 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**“Нива – СК-5” комбайнсен класĕнче мала тухнă тесе йышăнас:**

1 тата 2 вырăнсене парас мар.

3 вырăнта – Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăхри Валерий Иванович Пугачев комбайнер экипажĕ, 64 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – “Восток” хуçалăхри Юрий Сергеевич Иванов комбайнер экипажĕ, 64 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**Механизаторсем хушшинчи конкурс итогĕсене пĕтĕмлетекен районти комисси.**

### РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ АВГУСТĂН 21-МĔШĔ ТĔЛНЕ КĔРХИ УЙ-ХИР ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене çулнă тата вырнă. 2. Улăм пухса тирпейленĕ (процентпа). 3. Вăтам тухăç (пĕр гектар пуçне, центнерпа). 4. Хирте вырма агрегачĕсем ĕçленĕ. 5. Кĕр аки валли çĕр хатĕрленĕ (гектарпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 50 | 88,7 | 13,2 | 3 | 0 |
| «Волга» | 37 | 88,9 | 15,1 | 1 | 20 |
| «Восток» | 94 | 100 | 16,8 | 2 | 57 |
| «Герой» | 87 | 79,4 | 18,1 | 4 | 83 |
| К. Иванов яч. хис. | 93 | 25,4 | 10,9 | 0 | 0 |
| Ильич яч. хис. | 95 | 93,2 | 29,2 | 3 | 180 |
| ООО «ВТМ» | 0 | 0 | | 0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 43 | 82,6 | 16,0 | 2 | 135 |
| «Лидер» АФ | 2 | 0 | 14,0 | 0 | 250 |
| «Дружба» АФ | 100 | 100 | 21,8 | 0 | 0 |
| «Оринино» | 100 | 76,8 | 16,0 | 4 | 195 |
| «Передовик» | 35 | 64,4 | 16,4 | 3 | 17 |
| «Свобода» | 59 | 81 | 19,7 | 3 | 200 |
| «Сеятель» | 35 | 100 | 16,1 | 3 | 200 |
| Суворов яч. хис. | 81 | 12 | 24,9 | 3 | 540 |
| «Рассвет» АФ | 51 | 71,9 | 18,6 | 5 | 170 |
| «Ударник» | 62 | 67,6 | 22,6 | 7 | 500 |
| Чапаев яч. хис. | 77 | 74,3 | 13,4 | 2 | 97 |
| «Чемеево» | 81 | 56,5 | 13,4 | 2 | 108 |
| Чкалов яч. хис. | 75 | 100 | 33,8 | 2 | 250 |
| ООО Мичурин яч. хис. АФ | 0 | 0 | | 0 | 0 |
| **Ял хуçалăх предприятийĕсемпе** | **61,1** | **71,8** | **19,0** | **49** | **3012** |

## Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ

# Муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕрĕн строительстви çинчен

Граждансен сахал тупăшлă тата ытти категорийĕ пурăнмалли çурт-йĕр туянма пултарассине тивĕçтерес, юхăннă тата авари шайĕнчи çурт-йĕре хăвăрт пĕтермелли условисем туса хурас тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. Хуласенче, районсен административлă центрĕсенче тата пысăк ялсенче муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕрне анлăн тăвасси патшалăхăн чи малтан пурнăçламалли тĕллевĕ тесе шутлас.

2. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене çапла тума сĕнес:

муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕрне муниципалитет тытăмĕсен харпăрлăхĕнчи çĕр лаптăкĕсем çинче çеç тумалла;

муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕрĕн заказчикне муниципалитет тытăмĕсен администрацийĕсене палăртмалла;

муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕрĕн строительстви валли вырăнти бюджетсен, çĕр лаптăкĕсен ипотекипе усă курса явăçтаракан займ шучĕпе укçапа тивĕçтермелле;

хута яракан çурт-йĕре социаллă, ятарлă тĕллевпе тата коммерци тĕллевĕпе усă курма муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕрĕн фондне кĕртмелле.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

## Уяв кунне халалласа

# Библиотекăсене пырса курăр

Паян Раççей Федерацийĕн патшалăх ялавĕн кунне паллă тăватпăр. Çавна май районти пур библиотекăсенче те Раççей ялавĕн пĕлтерĕшĕ пирки кĕнекесен куравĕсем йĕркелеççĕ, калаçусем ирттереççĕ. Тĕслĕхрен, Сосновкăри библиотекăра “Раççей ялавĕн кунĕ – истори тата хальхи пурнăç” интеллектуаллă вăйă иртет. Катькассем ялавпа çыхăннă викторина хатĕрленĕ, Кашмашпа Çатракасси библиотекисенче вара çак куна халалласа литературăпа пĕлӳ сехечĕсем пулаççĕ. Асăннă мероприятисен тĕллевĕ – çитĕнекен ăрăва Раççей патшалăх символĕсем пирки ăнлантарса парасси, вĕсенче гражданлăхпа патриотизм туйăмне çирĕплетесси.

Районти информаципе художество ушкăнĕсем те вырмана хутшăнакансемпе йĕркелекен тĕл пулусенче ытти нумай-нумай ыйтусемпе пĕрле çак кун çинче те чарăнса тăраççĕ.

## Паян – Раççей Федерацийĕн патшалăх ялавĕн кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире уяв ячĕпе – Раççей Федерацийĕн патшалăх ялавĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çĕршыв ялавĕ вăл – патриотизм, çĕршыв çитĕнĕвĕсемпе çĕнтерĕвĕсен символĕ. Ăнсăртран мар ĕнтĕ Раççей мухтавĕ пулса тăракан паллă çынсене чысланă чух патшалăх ялавĕ обязательнăй атрибут пулса тăрать. Патшалăх ялавĕ Тăван çĕршывăн пĕрлĕхне тата вăйне кăтартать, унра – пирĕн несĕлсен паттăрлăхĕ тата малашлăхшăн тăрăшни.

Пĕтĕм тĕнчен политика арени çинче çĕршыв авторитечĕ ӳссе пынă май Раççей символĕн – патшалăх ялавĕн сумĕ те ӳсет.

Сире пурсăра та телей, ырлăх-сывлăх, республикăпа çĕршыв ăнăçлăхĕшĕн тăвакан ĕçре ăнăçусем сунатăп.

**Павел СЕМЕНОВ,**
**Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ,**
**«Единая Россия» фракци членĕ.**

# Раççей ялавĕн кунĕ

Çуллен августăн 22-мĕшĕнче Раççей ялавĕн кунне паллă тăваççĕ. Шурă-кăвак-хĕрлĕ тĕслĕ ялавпа – Раççей патшалăх ялавĕ – Алексей Михайлович патшара ларнă чух усă курма тытăннă. Шурă тĕс тасалăха, кăвак тĕс шанчăклăха, хĕрлĕ тĕс хăюлăха палăртса тăраççĕ. Ку тĕссемпе чи малтан Раççейăн уйăрса илмелли знакĕ шучĕпе Атăлпа Каспи флотилийĕн карапĕсем çинче усă курма тытăннă.

1705 çулта, 1-мĕш Петĕр патшара пулнă чух, çакăн пек шурă-кăвак-хĕрлĕ тĕслĕ пусма çине икĕ пуçлă ăмăрткайăк ӳкернĕ ялава Раççей суту-илӳ флотне панă. Кайран унпа патшалăх ялавĕ вырăнне усă курма пуçăннă. Анчах та 1858 çултан тытăнса 1883 çулччен патшалăх ялавĕ хура-сарă-шурă тĕслĕ пулнă. 1883 çулхи майăн 7-мĕшĕнче кăна 3-мĕш Александр император хăйĕн коронацийĕ умĕн шурă-кăвак-хĕрлĕ тĕсе çирĕплетнĕ. Унăн статусĕ 1896 çулта 2-мĕш Николай коронацийĕ вăхăтĕнче те сыхланса юлнă. Виçĕ революци, кайран совет влаçĕн символĕ хĕрлĕ ялав пулса тăнă. СССР саланнă хыççăн 1991 çулта каллех Раççей патшалăх ялавĕ шурă-кăвак-хĕрлĕ тĕслĕ пулса тăнă.

Историксем Раççей ялавĕн «ашшĕ» тесе Раççей императорне 1-мĕш Петĕре шутлаççĕ. Ялав тĕслĕхне вăл хăй ӳкернĕ тата 1705 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче суту-илӳ карапĕсем çинче унпа усă курасси пирки ятарлă указ кăларнă.

Анчах та Раççей ялавĕ пирки асăнни 1668 çулах, Алексей Михайлович – 1-мĕш Петĕр ашшĕ вăхăтне тивет. Ялав хатĕрлесси суту-илӳ флотне тума тытăннипе çыхăннă пулнă. Ялава патша хăй суйласа илнĕ, анчах та ун çинче виçĕ тĕсе мĕнле вырнаçтарасси пирки уçăмлăх пулман.

1712 çултанпа Раççей тинĕс çар флотĕнче Андреевски ялавпа усă курнă. Вăл шурă çине çветуй Андрей хĕресне кăвакпа ӳкернĕскер пулнă.

1883 çулта ятарлă хушу пичетлесе кăларнă. Унта савăнăçлă тапхăрсенче çуртсене илмлетнĕ чухне чăн вырăс ялавĕпе усă курма сĕннĕ. Вăл виçĕ тĕслĕ пулмалла пулнă: çӳлти – шурă, варринчи – кăвак, аялти – хĕрлĕ.

1918 çулччен çак ялав Раççей патшалăх ялавĕ пулса тăнă. Унтан ун вырăнне хĕрлĕ, революци ялавĕ килнĕ. 1918 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче Советсен пĕтĕм Раççейри 5-мĕш съезчĕ хĕрлĕ тĕслĕ суту-илӳ, тинĕс тата çар ялавĕсене йышăннă.

Виççĕмĕш хут виçĕ тĕслĕ ялав 1991 çулта çуралнă. РСФСР Министрсен Канашĕ ун чухне виçĕ тĕслĕ ялава республика ялавĕ тесе çирĕплетнĕ.

Августăн 21-мĕшĕнче вара, путч путлансан, РСФСР Аслă Канашĕ ăна Раççей Федерацийĕн наци ялавĕ тесе йышăннă.

## Шăрăх

# Шывра тимлĕ пулăр

Пан улми праçникĕ иртсе кайрĕ пулин те, çанталăк çуллахинчен те ăшăрах. Сывлăш температури 30 градус ытла. Кун пек чухне ачасене те, аслисене те шыв илĕртет.

Анчах тимсĕр пулнине шыв каçармасть. Акă районта Илем кунĕренпе 6 çын шывра путса вилчĕ. Вăл шутра 22 çулхи çамрăк та, 79 çулхи ватă тăхлачă та пур.

Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх, çитес кунсем тата шăрăхрах пулмалла. Çавăнпа та шыв хĕрне каякансене питĕ асăрхануллă пулма калас килет. Пĕлмен вырăнсенче, нумай вăхăт хĕвелте пулнă хыççăн, эрех-сăра ĕçсен шыва кĕни вырăнсăр. Пĕчĕк ачасене те пăхсах тăрăр.

Вут-кăвартан та уйрăмах асăрханмалла çак шăрăхра. Пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмалла.

**Район администрацийĕн гражданла оборона пайĕ.**

## Официально

# Внесены изменения в Уставы сельских поселений

Зарегистрированы изменения в Уставы Александровского, Большесундырского, Ильинского, Кадикасинского, Моргаушского, Москакасинского, Орининского, Сятракасинского, Тораевского, Хорнойского, Чуманкасинского, Шатьмапосинского, Юнгинского, Юськасинского, Ярабайкасинского, Ярославского сельских поселений Моргаушского района Чувашской Республики Управлением Министерства юстиции Российской Федерации по Приволжскому федеральному округу 29 июня 2007 года. С решениями Собраний депутатов о внесении изменений в Уставы сельских поселений можно ознакомиться в приложениях к сегодняшнему номеру районной газеты.

## Партисен пурнăçĕнчен

# “Раççей чи вăйлă çĕршыв пулмалла”



– “Единая Россия” политика партийĕ Çĕршывăмăр аслă та пуян çыннисем валли пурнăç условийĕсем кунран кун лайăхланчăр тесе тăрăшать. Пирĕн Раççей çĕршывĕ чи-чи вăйлă çĕршыв пулмаллла. Çакăн пек пултăр тесе хамран килнине йăлтах тăвăп, – терĕ икĕ çул каялла асăннă парти членĕ пулса тăнă пирĕн ентешĕмĕр Раççей Геройĕ Е. Г. Борисов иртнĕ тунти кун Пĕтĕм Раççейри “Единая Россия” политика партийĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн анлă пухăвĕнче. Сăлтавĕ те ахаль пулмарĕ пуçтарăнма. Хаçат вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ, халĕ асăннă партире пур шайри должноçсен кадр резервне (çав шутран декабрьте иртекен суйлаври кандидитсен списокне те) уççăн сасăласси пырать. Палăртмалла, кун пекки пирĕн çĕршыври парти системинче халиччен пулманччĕ-ха. Асăннă партин регионсенчи уйрăмĕсемпе обществăлла организацисем тăратнă списока кĕртнĕ кандидатсен шучĕ пĕтĕмпе 1200 çынран та иртет. Чăваш Ен тăратнă списокра вара 11 çын.

**Сăн ӳкерчĕкре: “Единая Россия” политика партийĕн парти билечĕ алăра ĕнтĕ.**

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

# Йӳнĕ хакпа çырăнăр

## Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен хаçат-журнал çырăнмалли хак 27 процент ӳсет

**Вăхăт малаллахваскать. Акă “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçата 2008 çулхи пĕрремĕш çур çул валли çырăнмалли тапхăр çитрĕ.**

**Вулакансене аса илтеретпĕр, район хаçатне августăн 31-мĕшĕччен унччченхи хакпа çырăнтаратпăр. Унччченхи хак тени вăл иртнĕ çырăнтару кампанийĕнчи хака пĕлтерет. Ултă уйăхлăха çыраннăшăн 147 тенкĕ те 42 пус тӳлемелле. Августăн 31-мĕшĕччен.**

**Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен мĕн пур хаçат-журнала çырăнтармалли хак 27 процент чухлĕ ӳсет. Çав шута, паллах, район хаçачĕ те кĕрет. Çакăн çинчен пĕлтерчĕç пире почта ĕçченĕсем.**

**Апла пулсан, хаклă вулакансем, “Çĕнтерӳ ялавне” çитес çул валли паян-ыранах çырăнса илме тăрăшăр. Хаçат хакланиччен 9 кун çеç юлчĕ.**

**Çитес çул та пĕрле пулăр! Райхаçат редакцийĕ.**